Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

44 (8005) № ✻ Кӗҫнерни кун, 2012 ҫулхи ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 14-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Районти Акатуй уявӗнче хатӗрленӗ репортаж

## Пилӗк аврӑмӑр хирте, савӑнар-и халь пӗрле!




***Пирӗн халӑхӑн ырӑ йӑла пур. Ӗлӗк-авалах чӑвашсем ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ хыҫҫӑн пӗрле пухӑнса савӑннӑ, ташланӑ-юрланӑ, вӑйӑ картисем йӗркеленӗ. Пур ҫӗрте те кӗрленӗ кун пек Акатуйсем. Ҫакӑ ӑнсӑртран мар, савӑнма сӑлтавӗ те пулнӑ. Ҫур аки – ҫӗр ӗҫченӗн тӗп ӗҫӗсен пуҫламӑшӗ, кӗрхи тухӑҫ никӗсӗ. Ҫынсем пӗрле пухӑнса савӑнса малашнехи ӗҫсем валли вӑй-хал пухнӑ.***

Районта кӑҫал ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене вӗҫленӗ ятпа ирттерекен юрӑ, ӗҫ тата спорт уявӗ – Акатуй – район центрӗнче июнӗн 10-мӗшӗнче кӗрлерӗ. Ҫӗр ӗҫченӗсен вара районта 59-мӗш хут ирттерекен ҫак уявра савӑнма сӑлтавӗ те ҫук мар. Уява уҫнӑ май ӑна хӑйӗн сӑмахӗнче район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев та палӑртрӗ. Уяв ячӗпе вӑл пурне те ӑшшӑн саламларӗ, пурне те ӑнӑҫу, ырлӑх-сывлӑх сунчӗ.

Кӑҫал уйрӑмах паллӑ ҫулталӑк. Социализмла Ӗҫ Геройӗ Е. Андреев ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитрӗ. Ҫӗр ӗҫӗнче пысӑк хисепе тивӗҫнӗ вӑл.

Район ҫыннисем ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене вӑхӑтлӑ тата пахалӑхлӑ туса ирттернӗ, халӗ вара тӗп задача – вӗсене тӗрӗс-тӗкел пӑхса ӳстересси.

(Малалли 2, 3-мӗш стр.)

**Сӑн ӳкерчӗкре: уяв саламӗ сире пурсӑра та.**

Симӗс ӗҫ ҫи – 2012

## Утӑ хатӗрлеме тухрӗҫ

Ҫӗртме уйӑхӗ хресчене черетлӗ ӗҫ ҫи умне тӑратрӗ. Ҫӗр ӗҫченӗ паян ирттен пуҫласа каҫчен выльӑх апачӗ хатӗрлессипе тимлет. Ӗнерхи вӑхӑта иртнӗ уяр кунсемпе туллин усӑ курса районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем пӗтӗмпе 160 тонна (14 процент) утӑ хатӗрлеме ӗлкӗрнӗ.

Асӑннӑ куна районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем нумай ҫул ӳсекен курӑксене пӗтӗмпе 693 гектар (11 процент) ҫулнӑ. Кунти ӗҫ калӑпӑшӗ паян Суворов яч. хис. (46 процент), Чкалов яч. хис. (40 процент), «Путь Ильича» (32 процент), «Свобода» (30 процент) хуҫалӑхсенче ыттисенчен палӑрмаллах пысӑк.

Ҫӗртме уйӑхӗн 13-мӗшӗ тӗлне ҫулнӑ курӑкран утӑ хатӗрлессипе Е. Андреев яч. хис., «Свобода», Чкалов яч. хис. хуҫалӑхсенче ӗҫleме пуҫланӑ. Уяр тӑнӑ кунсенче Муркашсемпе Кашмашсем 20-шер тонна утӑ типӗтсе кӗртнӗ пулсан, Исетерккӗсем ҫак калӑпӑша 120 тоннӑна (86 процент) ҫитернӗ.

Районти хуҫалӑхсен кӑҫалхи ҫу кунӗсенче пӗрлехи вӑйпа 5496 тонна утӑ, 16830 тонна сенаж, 19137 тонна силос янтӑламалла.

Ут ҫи вӑй илнипе пӗрлех районти ҫӗр ӗҫченӗсем ҫур акире акнӑ лартнӑ культурӑсене тӗрӗс-тӗкел пӑхса ҫитӗнтерессипе те сахал мар ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ. Ҫӗртме уйӑхӗн 13-мӗшӗ тӗлне хуҫалӑхсенче тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсен 49 процентне (6311 гектар) гербицидпа имҫамланӑ. 1835 гектарне (14,1 процент) тӗрлӗ сӑтӑрҫӑсенчен хӳтӗленӗ. Ҫак хушӑра ҫирӗплетнӗ агрегатсем 506 гектар ҫинчи ҫӗр улмие пӗрремӗш хут чӗрсе-кӑпкалатса тухнӑ.

Кашни ӗҫӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ пуррине районти ҫӗр ӗҫченӗ питӗ аван ӑнланать. Ҫавӑнпа паянхи ӗҫе ырана хӑварассинчен асӑрханса ӗҫлесе пырать.

**А. БЕЛОВ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе чысланӑ

**Ял хуҫалӑх производствинче нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн район администрацийӗн 2012 ҫулхи майӑн 29-мӗшӗнчи 468 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:**

– **Роза Ильинична НИКОЛАЕВӐНА**, Ильич яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн уй-хир бригадин рабочине;

– **Алексей Иванович ПЕТРОВА**, Ильич яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн трактористне;

– **Юрий Иосифович СКВОРЦОВА**, Чапаев яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн механизаторне;

– **Михаил Афанасьевич ТРОИЦКИЕ**, «Герой» ял хуҫалӑх производство кооперативӗн тӗп энергетикне.

**Ял хуҫалӑх производствинче нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн район администрацийӗн 2012 ҫулхи июнӗн 6-мӗшӗнчи 496 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:**

– **Валерий Алексеевич СТЕПАНОВА,** «Путь Ильича» агрофирма» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн водительне;

– **Антонина Николаевна ЯКОВЛЕВӐНА**, «Путь Ильича» агрофирма» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн уй-хир бригадин рабочине.

Пенси ыйтӑвӗсемпе

## Пенси виҫи пирки банк хыпарлӗ

РФ Пенси фончӗн Чӑваш Республикинчи уйрӑмӗпе «Россельхозбанкӑн» регионти филиалӗ пенсисем ҫитерсе панӑ чухне пенсионерсене ҫӗнӗ услугӑпа тивӗҫтерессипирки килӗшӳ ҫине алӑ пуснӑ.

Килӗшӳ условийӗсемпе пенсие вклад ҫине е банк картти ҫине куҫарса илсе тӑракан банк клиенчӗсем Пенси фончӗн тӳлевӗсем пирки банк кассинчен кирек хӑш вӑхӑтра та выписка илме пултараҫҫӗ. Ку услугӑшӑн укҫа тӳлемелле мар.

Выпискӑра пенсипе социаллӑ тӳлевсен виҫисене, хӑш вӑхӑтшӑн – хальхишӗн е унччченхи тапхӑршӑн тӳленине кӑтартаҫҫӗ. Ҫапла вара пенсионер уйӑхсерен паракан тӳлевсем пирки тулли информаци илме пултарать.

Банкпа Пенси фончӗн пенси шутласа панӑ чухнехи пӗр-пӗрин хушшинчи информацийӗ вӑрттӑнлӑхра юлать. Кунта ҫыхӑнӑвӑн хӳтӗленӗ каналӗсемпе, электронлӑ цифрӑллӑ майпа алӑ пуснипе усӑ кураҫҫӗ.

Банк пенси тӳлевӗсен структури пирки тулли информаципе тивӗҫтерни пенсионерсен ыйтӑвӗсене татса парассин пахалӑхне ӳстерессипе малалла татах тепӗр утӑм туни пулса тӑрать. Ҫакӑ уйрӑмах пӗлтерӗшлӗ. Мӗншӗн тесен пенсисене банк урлӑ илес текенсен шучӗ ӳссех пырать. Акӑ пенсисене «Россельхозбанкӑн» филиалӗсем урлӑ илсе тӑракансен шучӗ юлашки 3 ҫул хушшинче кӑна 10 хут ӳснӗ. Республикӑри пур районта та пенсионерсем ку банк услугисемпе усӑ кураҫҫӗ.

Паянхи куна Муркаш районӗнче пенсионерсен 41 проценчӗ пенсисене 2 банкра илсе тӑрать. Вӑл шутран 9 проценчӗ – банк карттисемпе. Пенсисене банксем урлӑ илсе тӑракансен шучӗ те, кун пек банксен йышӗ те юлашки ҫулсенче палӑрмаллах ӳсрӗ – 2005 ҫулта пенсисене пенсионерсен 28 проценчӗ 4 банкра илсе тӑнӑ.

Пенси фончӗ пенсионерсене ҫӗнӗ услугӑпа тивӗҫтерессине пурнӑҫа кӗртессипе пур банксемпе те ҫыхӑнса ӗҫлет. Ҫапах та паянхи куна пенси илекенсене выпискӑсем пама пур банк та хатӗр мар-ха.

Законодательствӑпа килӗшӳллӗн пенсионер хӑйӗн пенсине почта, банк е пенсипе тивӗҫтерекен ытти организаци урлӑ илсе тӑрассине хӑй суйласа илет.

**Пенси фончӗн районти управленийӗ.**

Ҫырӑнтару – 2012

## Хаклӑ вулаканӑм!

**Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата июльтен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ. 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 204 тенкӗ.**

**Вулакансене пӗлтернӗччӗ, июль уйӑхӗнчен шӑмат кунсенчи кӑларӑм хальхи пек 6 страницӑпа мар, 8 страницӑпа тухма пуҫлать.**

Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ хӗрӗме, йӑмӑка, аппана – Муркаш ялӗнче пурӑнакан **Римма Александровна АНТОНОВӐНА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми вӑй-хал, вӑрӑм кун-ҫул, телей сунатпӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: амӑшӗ, пиччӗшӗ, инкӗшӗ, Саша, Алиса, Ирина, Рома, Юля аппӑшӗ, тӑванӗсем.**

Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчи Ҫармӑҫкасси ялӗнче пурӑнакан юратнӑ аттепе аннене, кӑмӑллӑ хуньстарикпе хунямана, ытарайми кукаҫипе кукамая тата ҫывӑх тӑванӑмӑрсене – **Галина Герасимовнӑпа Виталий Ильич ХЛЕБКОВСЕНЕ** – ылтӑн туй ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ӗҫрен те, ҫынна пулӑшасран та пӑрӑнманскерсене малашне те тулли пурнӑҫ, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Пурнӑҫ ҫулӗ вӑрӑм та такӑр пултӑр, чир-чӗр сирӗнтен пӑрӑнса ирттӗр. 3 хӗр ҫуратса ӳстерсе пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларма сире ҫӑмӑл пулман пулин те, эсир алӑ усман. Ҫакӑншӑн эпир сире чун-чӗререн тав тӑватпӑр.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсемпе кӗрӳӗсем, тӑхлачисем, 4 мӑнукӗ, 2 кӗҫӗн мӑнукӗ, тӑванӗсем.**

Районти Акатуй уявĕнче хатĕрленĕ репортаж

# Пилĕк аврăмăр хирте, савăнар-и халь пĕрле!



Алран кайми аки-сухи.



Эпир те савăнатпăр уяври.

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

### ÇУРХИ ĔÇ – КĔРХИ ТУХĂÇ

Район пуçлăхĕ, Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев та Акатуй уявĕ ячĕпе саламларĕ. Кăçал ака-суха ĕçĕсене япăх мар туса ирттернĕ. Пĕтĕмĕшле вĕсене икĕ эрне хушшинче вĕçлеме май килнĕ. Кашнин тăрăшулăхĕпе ăсталăхĕ палăрать çакăнта.

Тăвата саманта палăртрĕ Игорь Васильевич. Кусем вĕсем пур ĕçе те вăхăтра туса ирттерессе, технологие çирĕп пăхăнасси, пахалăхла вăрлăхпа техника хатĕрлесси тата ĕç коллективĕсене ĕçлеме тивĕçлĕ условисем туса парасси.

Çурхи уй-хир ĕçĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Владислав Ананьев пĕтĕмлетрĕ. Кăçал çурхи уй-хир ĕçĕсене 14,8 пин гектар çинче туса ирттернĕ. Вăл шутран çурхи тĕш тырă культурисене 11,8 пин гектар çинче акса хăварнă. Çĕр улми 880 гектар йышăнать.

Çурхи уй-хир ĕçĕсен пахалăхне палăртма кăмăллă. Ильич ячĕпе, Чкалов ячĕпе хисепленекен, «Восток», «Ударник» хуçалăхсенче, «ВаСем» обществăра тата ытти хуçалăхсенче ака-суха ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ.

Владислав Кириллович механизаторсен ĕçне ырăпа палăртрĕ. Вĕсен тăрăшулăхĕ – ӳсĕмсен никĕсĕ.

Уй-хир ĕçĕсен калăпăшĕнче хресчен (фермер) хуçалăхĕсен тӳпи ӳссе пырать. Кăçалхи çур акинче вĕсем çурхи тĕш тырă культурисене 2500 гектар, çĕр улми 300 гектар акса-лартса хăварнă. Малашнехи ĕçсенче те ăнăçу сунчĕ вĕсене Владислав Кириллович, уяв ячĕпе саламларĕ.

### УЯВ ХĂНИСЕМ

Йышлă пулчĕç вĕсем. Муркашсене Акатуй уявĕ ячĕпе саламлама кăмăл тунисен шутĕнче хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти йышши техника хатĕрĕсене пăхса тăрас енĕпе Чăваш Республикинчи патшалăх инспекторĕ, тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ Владимир Димитриев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Николай Ванеркин, Муркашсен республикăри ентешлĕхĕн ертӳçи Александр Федотов, Чăваш Республикин профсоюзсен канашĕн председателĕ Ирина Филиппова, кӳршĕсем – Çармăс Республикинчи Ту çи Çармăс районĕн, республикăри Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Етĕрне районĕсен, Чул Хула облаçĕнчи Спасски районĕн, «Ядринмолоко» обществăн, перекет банкĕпе «Россельхозбанкăн» представителĕсем тата ыттисем. Вĕсем Муркашсене уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ ятпа, уявпа саламларĕç, малашнехи ĕçсенче ăнăçусем сунчĕç.

Пушă алăпа килмен хăнасем уява. Уяв парнисем шутĕнче дипломсемпе грамотăсем те, парнесем те – ӳкерчĕксенчен тытăнса бензинпа курăк çулмалли хатĕрсем таранах пулчĕç.

### КАМСЕМ-ХА ВĔСЕМ – ĔÇ ÇИ ПАТТĂРĔСЕМ?

Ĕç итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май ĕç çи паттăрĕсене, ырми-канми вăй хуракансене, хăйсен ĕçĕпе ырă ята тивĕçнисене чысламасăр-саламламасăр епле-ха тата вăл? Кун пеккисем вара Муркаш тăрăхĕнче сахал мар. Шăпах вĕсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ те ĕнтĕ.

Пысăк чыса тивĕçнисем хушшинче Ильич яч. хис. хуçалăхăн тĕп инженерĕ Георгий Сергеев тата асăннă хуçалăхри машинăпа ĕне сăвакан оператор Юлия Иванова. Вĕсене Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвĕсене парса чысларĕç.

Анаткассинчи ялти библиотека ертӳçине Галина Андреевăна та ырăпа палăртмалла. Вăл вара Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне илме тивĕçрĕ.

«Оринино» хуçалăхри машинăпа ĕне сăвакан оператора Зоя Васильевăна та уяв сцени çине хăпарма ыйтрĕç. Вăл Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотиллĕ пулчĕ.

«Ударник» хуçалăхăн аслă инженерне Илья Алексеева вара ял хуçалăх машинисемпе инкек-синкексĕр усă курма майсем туса панăшăн Чăваш Республикинчи Гостехнадзорăн Хисеп грамотине пачĕç.



Фермер хуçалăхĕн ертӳçи Р. Грачев республика грантне илчĕ.

Район администрацийĕн дипломĕсене тивĕçнисен ушкăнĕ уйрăмах пысăк. Кусем вĕсем Е. Андреев яч. хис. хуçалăх водителĕ Николай Оньков, «Восток» хуçалăх трактористĕ Виталий Наумов, «Герой» хуçалăх рабочийĕ Любовь Троицкая, Ильич яч. хис. хуçалăх рабочийĕ Надежда Михайлова, «Путь Ильича» агрофирмăн мастер-наладчикĕ Иван Васильев, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин поварĕ Зинаида Петрова, «Оринино» хуçалăх трактористĕ Виталий Максимов, «Передовик» хуçалăх тракторист-машинистĕ Вадим Данилов, «Свобода» хуçалăх водителĕ Евгений Якимов, Суворов яч. хис. хуçалăх механизаторĕ Вячеслав Никандров, «Ударник» хуçалăх механизаторĕ Николай Иванов, «Ударник» хуçалăх механизаторĕ Алексей Давыдов, Чапаев яч. хис. хуçалăхăн склад заведующийĕ Юлия Смирнова, Чкалов яч. хис. хуçалăх механизаторĕ Болеслав Никитин, «ВаСем» общество механикĕ Алексей Илугин, Мичурин яч. хис. агрофирмăн тĕп механикĕ Владимир Яковлев, «Бездна» общество тракторисчĕ Юрий Андреев, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен пуçлăхĕсем Виталий Горбунов, Анатолий Трепнев тата Владислав Бархаткин.



Тури чăвашсен музейĕн директорĕ Т. Ермолаева тата Москакассинчи «Колокольчик» ача сачĕн логопед учителĕ В. Гусева çурт-йĕр строительствин свидетельствисене тивĕçрĕç.

Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн Хисеп грамотисене «Восток» хуçалăх ертӳçине Михаил Шишокина тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхне Анатолий Лаптева, потребительсен кооперацийĕн Раççей шайĕнчи семинарне ирттерме пулăшнăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райпо председателĕсене Борис Андреевпа Людмила Майковăна пачĕç.



Муркаш юрлать, Муркаш савăнать.

Районти Акатуй уявĕнче хатĕрленĕ репортаж

# Пилĕк аврăмăр хирте, савăнар-и халь пĕрле!



Мăн Сĕнтĕрти Ивановсен çемйи патшалăх пулăшăвĕпе килĕшӳллĕн çурт-йĕр çавăрма тӳлевсĕр çĕр лаптăкне илме свидетельствăна тивĕçрĕ.



Турай ял тăрăхĕнчи Уйкас Турайри Владимир Иванова уявра Перекет банкĕн сертификатне парса чысларĕç.



Ирĕклĕ майпа кĕрешесси те хĕрӳ иртрĕ.



Ярапайкассисем аваллăхпа пуян.



Республикăри ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕн хуçи – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ойкасри Красновсен çемйи.

## ĔÇ ДИНАСТИЙĔСЕМ

Ырă йăла вăл – ашшĕ-амăшĕн ĕçне вĕсен ачисем, мăнукĕсем малалла тăсса пыни. Кун пек ĕç династийĕсем районта сахал мар. Вĕсене те асăрхамасăр хăвармарĕç уяв программинче. Акă Турай ял тăрăхĕнчи Анаткассинчи Андреевсен потребитель кооперацийĕн системинчи ĕç династийĕ 95 çулпа, Йӳçкассинчи Ивановсен ял хуçалăхĕнчи ĕç династийĕ 168 çулпа, Муркашри Огурцовсен сывлăх сыхлавĕнчи ĕç династийĕ 161 çулпа танлашать. Вĕсене пурне те чысласа саламларĕç уявра.

## ÇĔР ĔÇЧЕННЕ ПАТШАЛĂХ ТА ПУЛĂШАТЬ

Чăннипех те хăйне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă çын паян патшалăх пулăшăвĕсĕр юлмасть. Кун пеккисем вара пирĕн хушăра пулни малашлăха çирĕпрех шанчăкпа пăхма май парать. Акă республикăра пуçласа фермер ĕçне кӳлĕнекенсене ура çине тăма пулăшассипе ятарлă тĕллевлĕ программа вăйра. Ку енĕпе Çатракасси ял тăрăхĕнчи пуçаруçăсене мухтамалла. Республика грантне тивĕçнисем иккĕшĕ те çак ял тăрăхĕнчен. Очăкасси ялĕнчи Радислав Грачев фермер хуçалăхне йĕркелеме 900 пин тенкĕне, кунсăр пуçне йăла условийĕсене лайăхлатма 200 пин тенкĕне, Кашмаш ялĕнчи Петр Толикин вара çав тĕллевсемпех 690 пин тата 200 пин тенкĕне тивĕçнине ĕнентерекен сертификатсене илчĕç.

## НУМАЙ АЧАЛЛИСЕНЕ – СВИДЕТЕЛЬСТВĂСЕМПЕ СЕРТИФИКАТСЕМ

Патшалăх юлашки вăхăтра çĕр-шыври демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатассипе татăклă утăмсем тăвать. «Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ парассин хушма мерисем çинчен» саккун 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн çемьере 2-мĕш ача (е малаллахине) çуратакансене ача амăшĕн (çемье) капиталĕн сертификачĕпе тивĕçтереççĕ. Унăн сумми халĕ 387 пин тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне 3-мĕш ача çуратакансене ача амăшĕн капиталĕн республикăри сертификачĕпе (100 пин тенкĕ) тивĕçтереççĕ, çурт-йĕр çавăрма е ытти тĕллевпе усă курма çĕр лаптăкĕ тӳлевсĕр уйăрса пáраççĕ, кунпа пĕрлех хваттер илме те май пур.

Уявра Ильинка ял тăрăхĕнчи Ойкасри Алевтинăпа Петр Корнеевсен, Оринин ял тăрăхĕнчи Атапайри Галинăпа Геннадий Киселевсен, Муркашри Натальяпа Сергей Ивановсен çемйисем ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене, Хорнуй ял тăрăхĕнчи Ларисăпа Александр Александровсен, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Ермакри Алинăпа Александр Горшковсен, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ойкасри Людмила Краснова çемйи ача амăшĕн капиталĕн республикăри сертификачĕсене, Мăн Сĕнтĕрти Ольгăпа Юрий Ивановсен, Ярапайкассинчи Кӳстерекри Фея Ершовăпа Владимир Андреевăн нумай ачаллă çемйисем тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ илмелли сертификатсене, «Ялсен 2013 çулчченхи социаллă аталанăвĕ» Федераллă тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Шурчари Татьяна Ермолаева тата Чуманкассинчи Валентина Гусева ялта çурт-йĕр çавăрма социаллă тӳлев свидетельствисене тивĕçрĕç.

## ĂСТАСЕМ – ХАМĂР ХУШĂРАХ

Уявра никама та кичем пулмарĕ. Хăнасемпе ял çыннисем фотовыставкăпа интересленсе паллашрĕç, ял тăрăхĕсен палаткисем таврашĕнче те çынсем йышлă пулчĕç. Халăх пултарулăхĕн тата ача-пăча ĕçĕсен выставкинче паллашмалли-курмалли чылай пулчĕ. Раççей историйĕн çулталăкĕ пулнă май ял тăрăхĕсем хăйсен палаткисене çавна кура йĕркеленĕ.

Акă Ярапайкасси ял тăрăхĕн палаткинех илер. Ĕлĕк чăвашсем мĕнле пир тĕртни пуриншĕн те интереслĕ. Çавăнпах вĕсем «Чувашия мастеровая» номинацире çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕç.

Юнкă ял тăрăхне те палăртмалла. Ватă çын çăм арлать. Пĕтĕмпех Раççей историйĕн çулталăкĕпе çыхăннă. Ял тăрăхĕ «За верность традициям» номинацире мала тухрĕ.

Хорнуй ял тăрăхĕн палаткинче вара пурте «ĕçе путнă». Амăшĕ ачисене пăхать. Упăшки алă арманĕпе ĕçлет. Асламăшĕ çăм арлать. Хорнуйсем «За лучшую презентацию выставки» номинацире çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç.

Çавăн пекех «За сохранение самобытности народа» номинацире Йӳçкасси яч тăрăхĕ, «Из поколения в поколение» номинацире Оринин ял тăрăхĕ, «За сохранение традиций народного искусства» номинацире Турай ял тăрăхĕ мала тухрĕç, район администрацийĕн Тав çырăвĕсемпе парнисене тивĕçрĕç.

## СПОРТПА ТУСЛИСЕН – ХĂЙСЕН УЯВ

Уяв программи тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсемпе пуян пулчĕ. Спортпа туслисем хăйсен вăйне волейболла выляссипе, ирĕклĕ майпа, боксла кĕрешессипе, пăт пуканĕ çĕклессипе, армспорт енĕпе, турник çинче çĕкленессипе виçрĕç. Çĕнтерӳçĕсем парнесене тивĕçрĕç. Тĕп парнесене вара – такасене – ирĕклĕ майпа кĕрешессипе мала тухнă Шупашкар хулин представителĕ Руслан Самарин, волейбол енĕпе мала тухнă «Райбыт» команди çĕнсе илчĕç.

## ЮХРĔ ЮРĂ ЯН! ТА ЯН!

Кунĕпех Акатуйра хавас юрă-кĕвĕ янăрарĕ. Районти художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Москакассинчи «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ансамблĕн, районти Культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен хорĕн, Мăн Токшикри «Тăванлăх» фольклор ушкăнĕн, Йӳçкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи эстрада ансамблĕн, Орининти Культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен хорĕн, Калайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Ентеш» юрăпа ташă ансамблĕн, Тойкилтĕри Культура çурчĕ çумĕнчи «Хĕлхем» эстрада ансамблĕн коллективĕсем, ачасен Муркашри искусство шкулĕн пултарулăх ушкăнĕ уява чăн-чăн илем кĕртрĕç. Юлашкинчен вара Шупашкартан килнĕ «Асамат» эстрада ушкăнĕ уява пухăннисене пурне те илемлĕ юрă-кĕвĕ парнелерĕ.

## АЧА-ПĂЧА САВĂНЧĔ

Ача-пăчана савăнма чăннипех те сăлтав пулчĕ уявра. Вĕсене карусель те йыхравларĕ, тĕрлĕ ăмăртусемпе конкурссене, аттракционсене те хутшăнма май пулчĕ. Батут çинчен ачасем хăпма пĕлмерĕç. Вĕçхĕрсĕр савăнăç. Хăшĕсем хăйсене килĕшекен чĕр чунсемпе пĕрле сăн ӳкерĕнчĕç, пĕчĕк автомашинăсемпе ярăнчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ**.

Полици хроникинчен

## Пĕрисем сывлăха çирĕплетесшĕн, теприсем...

Физкультурăпа спорт комплексне пĕрисем сывлăха çирĕплетме çӳреççĕ, теприсем вара кăра çилĕне лăплантарма кăна иккен. Кăнтăрла çавăнта икĕ арçын тĕл пулнă. Анчах та вĕсем хушшипе хура кушак чупса иртнĕ пулмалла. Çулĕпе аслă арçын кĕçĕннине пĕр шелсĕр çапнă. Çапла вара иккĕмĕшĕн шурă халатлисенчен пулăшу ыйтма тивнĕ.

## Упăшкине çĕçĕпе чикнĕ

Мишер ялĕнчи пĕр хĕрарăм мăшăрĕпе темĕн пайлайман. Пĕр пуçарнă хирĕçӳ шалтан шала кĕнĕ, алла çĕçĕ тытасси патнех çитнĕ. Хĕрарăм упăшкине пĕр шелсĕр хырăмĕнчен чикнĕ. Йывăр суранланнă арçынна реанимаци уйрăмне илсе çитернĕ.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Объявление

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:190501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Васильева Ольга Андреевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Анаткасы, ул. Березовая, д. 14.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:190501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:190401.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Паян – РФ Миграци службин ĕçченĕсен кунĕ

# Паспорт ыйтăвĕ – кулленхи ĕç

**Хаçатра «Ыйтăр – хуравлатпăр» рубрика пуррине пĕлсе сирĕн урлă миграци службин ĕçченĕсен кунĕ хăçан пулнине пĕлес килет.**

**А. САМОЙЛОВ.**
Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.



***Çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче миграци службин ĕçченĕсен кунĕ пулнă май РФ Миграци Службин ЧР Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхĕпе Л. ПЛЕЧОВĂПА çыхăнтăмăр. Ун урлă районта çак службăра ĕçлекенсене тата асăннă службăн ветеранĕсене саламларăмăр.***

– Саламланăшăн тавтапуç. Уявсем килеççĕ те каяççĕ. Анчах РФ Миграци Службин ЧР Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн тĕп ĕçĕ улшăнмасть. Вăл – патшалăхăн миграци политикине тивĕçлĕ шайра тытса пырасси, çак ĕçре саккунлăха малта тăратасси, гражданство тата паспорт çинчен калакан РФ законодательствине тĕрĕс пурнăçласа пырасси. Сирĕн салама йышăнса кĕскен хамăр историпе паллаштарам. Район йĕркеленсенех шалти ĕçсен пайĕнче паспортпа ĕçлекенсем 2 çын пулнă. Çулсем иртнĕçемĕн çак ĕçĕн ответлăхĕ пĕртте чакман. Пирĕн службăра тарăн йĕр хăварнисем: милицин кĕçĕн лейтенанчĕ Н. Степанов, А. Прокопьева ĕçчен, милици майорĕ В. Ершов, милици подполковникĕ Н. Тимофеев, шалти служба майорĕ В. Игнатьев, шалти служба подполковникĕ В. Трилинский, милици капитанĕ М. Конузина, шалти служба майорĕ З. Сорокина. Вĕсем кашниех асăннă службăна ăнăçлă ертсе пынă. Паян пирĕн патăмăрта ĕçлекен О. Смирновăпа М. Иванова специалистсем те **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** унчченхи ĕçсене малала туса пырассипе тăрăшаççĕ.

Эпир хамăр патăмăра килекен кашни гражданинăн ыйтăвне вăхăтра та туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Паянхи пурнăçра пирĕн граждансем ют çĕр-шывсемпе анлăрах хутăшма пуçлани курăнать. Ку вăл пирĕн общество хăйĕн аталанăвĕнче тепĕр утăм малалла пуснине кăтартать. Кунта вара ют çĕр-шыв паспорчĕн ыйтăвĕ мала тухать. Ун тĕлĕшпе хаçатăн çитес номерĕнче тĕплĕнрех чарăнса тăрăпăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Редакци почтинчен

## Юнкăри вĕçевçĕсем

Юнкă шкулĕнче маттур ачасем нумай. Пур ĕçре те ĕлкĕрсе пыма тăрăшаççĕ вĕсем. Чылайăшĕ тĕрлĕ кружока çӳрет.

Ăнăçлă ĕçлекеннисенчен пĕри – "Авиамоделировани" кружокĕ.

Юнкăри Ю. Самушков шкулта вĕреннĕ чухнех самолетсен тĕслĕхĕсене ăсталама кăмăлланă. Шкулта вăл географи урокне ертсе пырать пулин те ун патне техникăпа кăсăкланакансем туртăнаççĕ. Епле пысăк савăнăç вăл харпăр хăй аллипе ăсталанă самолет çӳле улăхсан, пуринчен те аякка тата çӳле вĕçсен вара – пушшех те. Шел пулин те самолет ăстисем юлашки тапхăрта сахаллансах пыраççĕ. Кружока ăнăçлă ĕçлеттерессишĕн ертӳçĕ пултарулăхĕнчен чылай килет. Унта çӳрени малашнехи пурнăçра та самай пулăшать.

Юнкă ачисем хушшинче çĕнтерӳçĕсем чылайăн. Кăçалхи июнĕн 2-мĕшĕнче Йошкар-Олара ырăпа палăрчĕç вĕсем. Кĕçĕннисен ушкăнĕнче Д. Маряшкин – чи пултаруллисенчен пĕри. И. Яндимиров вара аслисен ушкăнĕнче иккĕмĕш пулчĕ. Вĕсем Мускаври авиаци институтĕнче иккĕмĕш курсра вĕренекен С. Толстовран тĕслĕх илеççĕ.

Кун-çула тивĕçлĕ ирттерме пурнăç тĕллевĕ кирлĕ. Çавна тупма пултарсан кăна çын телейлĕ пулĕ.

**И. ВЕТЛУГИНА.**

Кулăшла калав

## ПАТАК АЧИ

Михаля Мускав мĕнне тĕлленменччĕ те. Халĕ акă пăх-ха, анкарти хыçне тухса кĕнĕ пек тĕп хулана кайса килет. Эрлешеççĕ те юлташĕсемпе, хул пуççи урлă тем те курма ĕлкĕрнĕ сумккисене çакаççĕ те Шупашкар вакзалне вĕçтереççĕ, унтан вара Мускава тĕрлеттереççĕ. Пĕри те ятарлă пĕлӳ илмен, анчах тума пĕлмен ĕç çук вĕсен. Чаплă çынсене тем тĕрлĕ кермен туса панă, нушине те, ыррине те курнă, укçапа та, кĕсье тĕпĕнчи пĕр пуспа та киле кĕрсе тăнă. Çапах Михаля кăмăллă. Ял урамĕпе вăл ĕлĕкхилле вĕтĕ утăмсемпе мар, мăнаçлăн утать, пуçне каçăртать те таврана сăнанçи тăвать. Питĕ вашнăй çын пулса кайрĕ.

Вырăс сăмахĕсемпе перкелешесшĕн тата. Амăшĕ «кашăк» тет, вăл вара апла мар, «ложка» тесе тӳрлетет. «Кай» тенине те, «кил» тенине те «иди» тесе калать. Тăван шăллĕне те «браток» тесе чĕнме пуçларĕ.

Шăллĕ тенĕрен... Ăна пула анчахрах Михалян ай-ай питне хĕретме тиврĕ. Мускавран çитсе тулли кăкăрпа сывласа янăччĕ кăна, Ваçук шăллĕ çыпçăнчĕ ун патне:

– Эх, сана лайăх Мускавра çӳреме, мана вара еплерех кунта? Анне алăран шаккасах тăрать, ăна тумастăн, кăна тумастăн, тет. Патак ачи эп, Михаля...

– Çук, патак ачи мар-ха эсĕ, – терĕ пиччĕшĕ. – Чим-ха, чим, мĕнле каламалла-ха ăна? – Михаля «патак ачине» çийĕнчех вырăсла куçарса калас терĕ, анчах пултараймарĕ. Вырăс сăмахĕсене тем тĕрлĕ çавăрттарсан та чĕлхе вĕçне кирли килмерĕ.

Ваçук пиччĕшĕн куçĕнчен чăтăмсăррăн пăхрĕ. Лешĕ татах çухалса кайрĕ.

– Мĕнле калас та... – шухăшларĕ вăл татах. – Палкин сын эсĕ! – лаплаттарчĕ тăруках, савăннипе сăнĕ-пуçĕ хăйĕн çуталса кайрĕ.

– Парап сана «Павăлăн сын»! – кĕтмен-туман çĕртен илтĕнчĕ амăшĕн сасси. – Сирĕн аçăр Йăван пулнă, ăçтан тупрăн Павăла!

– Манăн та палкин сын пулас килмест, патак ачиех лайăхрах, – мăкăртатрĕ Ваçук.

Михаля каçăртнă пуçне пĕкрĕ те айккинелле пăрăнчĕ. «Деревня çав эсир, деревня...», – калаçрĕ вăл хăйĕн ăшĕнче.

**В. КОНСТАНТИНОВ.**

Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, аттене, ывăлăмăра – Отаркка ялĕнче пурăннă Владимир Георгиевич Захарова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата çак нимĕнпе танлашайми хурлăха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Муркашри тĕп больница коллективне, юлташсене, кӳршĕсене, тăван-хурăнташсене тата ялйыша пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Захаровсен çемйи.**

Пĕлтерӳсем. Объявления


**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР** 3-10.
**ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**

**Продаем тракторы Т-25, МТЗ-82.1, плуги, опрыскиватели, косилки, грабли-ворошилки, пресс-подборщики. Все новое. Тел.: 8(8352)40-67-65, 8-927-851-68-58. 8-8.**

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА И НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 6а (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 4-10.**

* * *

**16 июня в РДК с 9 ч. до 16 ч. – выставка-продажа летней обуви производства г. Ульяновск, г. Санкт-Петербург и Республики Беларусь.**

* * *

**Срочно продаю грабли поперечные тракторные. Ширина захвата 4,5 м. Тел.: 8-927-862-33-01.**


* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванов Николай Николаевич, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Эльменя, д. 12, кв. 12.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:200102.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Муркашри тĕп больница коллективĕ хирурги уйрăмĕнчи аслă медсестрара ĕçлекен О.П. Захаровăн мăшăрĕ

**Владимир Георгиевич**
**ЗАХАРОВ**

сарăмсăр вилсе кайнă пирки тарăннăн, чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тăванĕсемпе юлташĕсем Çулав ялĕнче пурăннă

**Николай Александрович**
**ФИЛИППОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтереççĕ.

Прогноз погоды

| | четверг 14 июня | | | | пятница 15 июня | | | | суббота 16 июня | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +17 | +27 | +28 | +21 | +15 | +21 | +24 | +20 | +17 | +23 | +25 | +22 |
| Давление мм | 741 | 740 | 742 | 744 | 746 | 747 | 748 | 746 | 745 | 744 | 743 | 741 |
| Влажность % | 96 | 65 | 38 | 70 | 92 | 64 | 47 | 73 | 79 | 68 | 54 | 63 |
| Ветер м/сек | 2 | 5 | 8 | 6 | 4 | 3 | 4 | 1 | 2 | 5 | 5 | 4 |
| | З | Ю | З | С-З | С-З | С | С-В | С | В | В | В | В |
| Солнце восход / заход | | 04:06 | 21:40 | | | 04:05 | 21:41 | | | 04:05 | 21:41 | |
| Луна восход / заход | | 01:25 | 16:22 | | | 01:44 | 17:31 | | | 02:07 | 18:37 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
от производителя.
Замер. Доставка бесплатно.
Низкие цены.
**Тел.: 8-987-576-65-62.** 3-10.


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим, кадастровый инженер Токмолаева Л.И., номер квалификационного аттестата 21-10-34, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, ingenercheb@ya.ru, тел.: 28-06-06 извещает участников долевой собственности СПК им. Мичурина о подготовке проекта межевания земельного участка, выделяемого в счет долей.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

Заказчиком кадастровых работ является: Сорокина Валентина Александровна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 12/1.

С проектом межевания земельного участка, выделяемого в счет земельной доли можно ознакомиться по адресу: г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304.

Обоснованные возражения по проекту межевания относительно размера и местоположения границ выделяемого земельного участка принимаются в письменной форме в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428022, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 13.06.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4635.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.